25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
2
ЭРНЕКУН
230 (6165) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ĕçсыннисен депутачĕсен Шупашкар райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркне лайăх усă курнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракан республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Шупашкар МТС-ĕ тăрăх:

127. Трактористка **Н. А. Алексеева**. Вăл çулталăкри ĕç планне 120 процент тултарнă, 152 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

128. Комбайнерка **А. И. Комиссарова**. Вăл «Коммунар» комбайнпа 196 гектар тырра лайăх пахалăхпа вырса пуçтарнă, 158 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

129. Комбайнер **А. В. Верхилеев**. Вăл комбайнпа ĕçлемелли плана 202 процент тултарнă, 81 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

МТС-сен дирекцийĕсемпе политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркне лайăх усă курнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракан республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Куванкин МТС-ĕ тăрăх:

130. Тракторист **Василий Иванович Келин**. Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 113 процент тултарнă, 502 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

131. Трактористка **Александра Павловна Панявина**. Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 110 процент тултарнă, 92 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

132. Трактористка **Мария Павловна Софьина**. Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 102,5 процент тултарнă, 755 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Районсенчи ялхуçалăх выставкисем

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă хăйсен постановленинче районсенче кашни çулах ялхуçалăх выставкисем организацилесе ирттерме хушса хăварчĕç. Вăл выставкăсенче колхозсен çитĕнĕвĕсене, малта пыракан колхозсем тырпул тухăçне ÿстерес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн продуктивноçне вăйлăн хăпартас тĕлĕшпе тунă паха тĕслĕхсене кăтартмалла.

Кăçал республикăри районсенче пулса иртекен ялхуçалăх выставкисен пĕлтерĕшĕ татах та пысăкланать. Вĕсем социализмлă ялхуçалăх çĕршывра нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пулса пынă вăхăтри йывăрлăхсене çĕнтерсе тунă çитĕнÿсене кăтартса параççĕ.

Районри выставкăсенче кăçал колхозниксемпе колхозницăсем тăван çĕршывпа фронта ытларах тырпул, пахча-çимĕç, аш-какай, сĕт-çу тата чĕртавар туса парас ĕçре вăя шеллемесĕр, çĕрне-кунне пĕлмесĕр хĕрÿллĕн тăрăшса тунă хăйсен пархатарлă çитĕнĕвĕсене кăтартса параççĕ. Çавăнпа та районри ялхуçалăх выставкисене уйрăмах лайăх организацилесе ирттермелле.

Районри выставкăсене сентябрĕн 25-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче туса ирттермелле. Республикăн хăшпĕр районĕсем çак ответлă, пысăк ĕçе организованно туса ирттерме тимлĕн хатĕрленеççĕ. Выставка комитечĕсем ĕçе тытăннă, вĕсем выставка участникĕ пулма тивĕçлĕ колхозсене уйăрса çирĕплетеççĕ. Кашни колхоза выставкăн участникĕ тума тăрăшаççĕ.

Республикăри колхозсем районри ялхуçалăх выставкисене пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Малта пыракан колхозсем авăн çапса пĕтерчĕç, пахча-çимĕçсене пуçтарса тирпейлесе хучĕç, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татассишĕн хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те нумай колхозсем çак кунсенче чылай лайăхрах ĕçлени курăнать.

Канаш районĕнчи 49 колхозран 37 колхозĕ выставкăра тĕрлĕ енĕпе тунă ÿсĕмсене демонстрацилеме хатĕр. 19 колхоз тырпул тухăçлăхне ÿстерес плана ирттерсе пурнăçласа, 13 колхоз техникăллă культурăсем туса илес плана ирттерсе пурнăçласа выставкăна тухаççĕ. Ăстакассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз выставкăна ялхуçалăхĕнчи пур ĕççене те отлично пурнăçланипе тухать. Колхоз тĕштырăсем, техникăллă культурăсем туса илес тĕлĕшпе государство планне ирттерсе пурнăçланă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнÿ тунă тата хурт-хăмăр утарĕн паха ĕçне кăтартса парать. Елчĕк районĕнчи колхозсем районри ялхуçалăх выставкине уборка ĕçĕсен вĕçленипе, государство умĕнчи обязательствăсене парса татнипе тухассишĕн тимлĕн кĕрешеççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал тĕштырăсене вăтам шутпа гектар пуçне 16,5-шер центнер, сÿс-кантăр 10 центнер туса илнĕ. Колхоз ялхуçалăх выставкине ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленипе, государство умĕнчи пур обязательствăсене те пĕтĕмĕшпех пурнăçланипе тухать.

Нумай колхозсем выставкăсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, вĕсен продуктивноçне ÿстерес тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсене кăтартса пама хатĕрленеççĕ. Фермăсенче выльăхсене пухса çитереççĕ, витесене юсаççĕ, выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлеççĕ, силос хывас плана ирттерсе пурнăçлама тăрăшаççĕ. Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ĕне-пăрусем енĕпе 104 процент, сурăхсем енĕпе 121 процент, сыснасем енĕпе 150 процент, кроликсем ĕрчетес енĕпе 220 процент пурнăçланă. Кашни сăвакан ĕнерен сĕт суса илес плана 112 процент тултарнă. Колхоз выльăх-чĕрлĕхсене хĕле кĕртме витесене юсаса хатĕрленĕ, апат-çимĕç çителĕклĕ таран хатĕрлесе хунă. Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхоз районри ялхуçалăх выставкине хутшăнать. Колхозăн сысна ферминче ĕçлекен Куракова юлташ хăйне çирĕплетсе панă «Снежинка» ама сыснаран кăçал 26 çăвăр илнĕ, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ.

Малта пыракан колхозсен примерĕпе районсенчи выставкăсене кашни колхозăн çĕнĕ çитĕнÿсемпе тухма тăрăшмалла. Выставкăсем уçăлас умĕнхи вăхăтпа туллин усă курса, выльăх-чĕрлĕх фермисене комплектласа çитермелле, контрактаци планне пурнăçламалла, витесене ăшăтса хĕле юрăхлă тумалла, государствăна аш-какай, сĕт-çу, тир, çăм парса татмалла.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ районри ялхуçалăх выставкисене организацилесе ирттермелли положенисем кăларчĕ, ăна районсене ярса пачĕ. Вăл положенисем тăрăх районри ялхуçалăх выставкин участникĕсем пулма колхозсем, уйрăм бригадăсем, выльăх-чĕрлĕх фермисем, уйрăм дояркăсем, свинаркăсем, конюхсем, МТС тата трактористсемпе комбайнерсем пултараççĕ.

Районсенчи ялхуçалăх выставкисене лайăх организацилесе ирттересси çĕрĕç органĕсен, ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен задачи пулса тăрать. Районсенчи коммунистсемпе комсомолецсен, партире тăман большевиксен ялхуçалăх выставкисене кăтартуллăн организацилесе ирттерессишĕн вăя хурса ĕçлемелле. Колхозсенче, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн сармалла. Аслă уява кашни колхоз ялхуçалăхĕнчи ĕççене пĕтĕмпех туса çитернипе кĕтсе илмелле, кашни колхоз районри ялхуçалăх выставкине хутшăнмалла.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Г. М. Никитин юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Георгий Михайлович Никитин юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместительне пума уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçне тăвакан **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар, 1942 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 30-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Пирĕн карап Балти тинĕсĕнче нимĕçсен 10 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинине çити, боеприпассем тиенĕ 15 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Хулан çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче нимĕçсем татах тепĕр танковăй дивизие наступление янă. Питĕ пысăк çухатусем тÿссе, противник пĕр участокра пирĕн чаçсене хĕснĕ. Çав çапăçусенче тăшманăн 15 танкне, 2 бронемашинине, 14 автомашинине, минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотине икĕ батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Совет летчикĕсем нимĕç авиацин йышлăрах вăйĕсемпе хăюллăн та паттăррăн çапăçаççĕ. Кĕçĕн лейтенант Кочетов юлташ пĕр кун хушшинче нимĕçсен «Юнкерс—87» тата «Мессершмитт—109» йышши самолечĕсене персе ÿкернĕ. Гультяев старшина тăшманăн икĕ истребительне пĕтерсе тăкнă. Федоров лейтенант икĕ кун хушшинче тăшманăн «Мессершмитт—109» тата «Макки—200» йышши самолечĕсене персе ÿкернĕ. Кунсăр пуçне, Федоров юлташ Смирнов старшинапа пĕрле пулса нимĕçсен «Юнкерс—88» йышши самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вăйлă çапăçусем пынă. Нимĕç автоматчикĕсем танксем пулăшса пынипе пирĕн Н-ски стрелковăй часть хÿтĕлекен рубежа атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене противотанковăй пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе кĕтсе илнĕ. Противник хăйĕн икĕ танкне тата 100 çити салтакне çухатнă хыççăн каялла чакнă. Тепĕр участокра пĕр высоташăн кунĕпех хаяр çапăçусем пынă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнă, анчах та пирĕн чаçсем противника çĕнтерсе, каç пуларахпа çав высотана йышăнса илнĕ. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ.

* * *

Моздок районĕнче противникăн мотопехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем пирĕн оборона рубежĕсене татса кĕме хăтланнă. Пирĕн войскăсем нимĕçсен пур атакисене те сирсе пăрахнă. Çав участокра икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 26 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсенче нимĕçсен 18 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскри кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем противникпа вăйлăн çапăçса румынсен 3-мĕш горнострелковăй дивизине аркатса тăкнă. Румынсен çав дивизийĕнче салтаксемпе офицерсем 8 пин çынна çити вилнĕ е аманнă. Тăшманăнне 25 оруди, 2 танк, 75 пулемет, 50 автомашина тата боеприпассен икĕ складне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Румыни салтакĕсен пĕр взвочĕ Хĕрлĕ çар енне куçнă. Взвод командирĕ кĕçĕн лейтенант Григоре Пробаж çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи оборонăра тăратчĕ. Сентябрĕн 22-мĕшĕнче вырăссем наступлени пуçласа ячĕç. Вырăссем хĕссе пынине пирĕн батальон чăтса тăраймарĕ, пысăк çухатусем тÿссе, каялла чакма тытăнчĕ. Эпĕ хамăн взводри салтаксене юлса тыткăна парăнма сĕнтĕм. Салтаксем пурте манăн сĕнĕве хапăлласа йышăнчĕç. Пирĕн çумма ытти взводсенчен тата 6 салтак хутшăнчĕç. Румынсем нимĕçсене чĕререн курайманççĕ, мĕншĕн тесен нимĕçсем румынсене хĕнхур кăтартрĕç, халĕ вĕсем Румынине пачах çуралантарчĕç».

* * *

Италин «Торино» ятлă дивизийĕнчи 81-мĕш полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ лейтенант Дарио Агостини çапла каласа панă: «Итали салтакĕсемпе офицерĕсем халĕ хĕл çывăхарса килни çинчен нумай калаçаççĕ. Вырăссен сиввисенчен вĕсем пурте питĕ хăраççĕ. Пирĕн хĕллехи çипуçсем çук. Пĕлтĕр Хĕвелтухăç фронтĕнче пулнă мĕнпур Итали салтакĕсенчен 60 процентне ытла тăм илнĕ. Тăм илнипе нумайĕшĕсем вилнĕ. Пире те çавнашкал ăраскал кĕтсе тăни çинчен шухăшласанах салтаксем хăраса ÿкеççĕ».

* * *

Красныстав хули çывăхĕнче (Польша) гитлеровецсем нимĕç помещикĕн иминче авăн çапма 200 хресчене ытла хăваласа пухнă. Çĕрле хресченсем помещикăн иминчи икĕ молотилкăна çĕмĕрсе тăкнă, темиçе капан тырра çунтарса янă, вара тарса çухалнă.

* * *

Оснабрюк хулинче (Германия) авиаци бомбисем тăвакан заводсенче ĕçленĕ 18 итальянец июнь уйăхĕнчех таçта кайса çухалнă пулнă. Халĕ паллă пулнă тăрăх, саботаж тунăшăн айăпласа, гестапо çав итальянецсене арестленĕ те персе пăрахнă. Италире тăванĕсем çав рабочисен пурнăçĕ çинчен паян кун та нимĕн те пĕлмеççĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Хулан çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче икĕ енĕ те артиллерипе тата минометсемпе персе тăнă. Гвардеец-минометчиксем 13 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă,ултă кĕпçеллĕ пулемета пĕтерсе тăкнă тата 500 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем нимĕçсене хула çывăхĕнчи пĕр ялтан хăваласа кăларнă. Старши лейтенант Носков юлташ ертсе пыракан 14 боец çавтери пысăк хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Пĕр кун хушшинче вĕсем нимĕçсен йышлă атакисене сире-сире янă, 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă тата противникăн 2 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем уйрăм участоксенче противникпа çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен пехотипе танкĕсен икĕ атакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 350 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, пĕр танкне, 6 противотанковăй орудине, 2 минометне тата боеприпассем тиенĕ темиçе автомашинипе лавне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра гвардейски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ, 3 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине 2 ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Моздок районĕнче Н-ски подразделени çĕрле противник тăракан хутор патĕнче засада тунă та нимĕçсен 60 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Автоматчиксем Бондин, Гиринов тата Быков юлташсем гранатăсем ывăтса нимĕçсен 3 танкне экипажĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем гитлеровецсен темиçе контратакине сирсе янă, румынсен пехотине пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем пирĕн оборонăна саваллланса кĕнĕ противникпа çапăçнă.

* * *

Воронеж районенче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пирĕн разведчиксен пĕр ушкăнĕ, юханшывăн тепĕр енне каçса, противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та 40 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Разведчиксен тепĕр ушкăнĕ Воронежран кăнтăртарахра тăшманăн 35 салтакне вĕлернĕ. Артиллери гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, минометсен батарейине тата грузсем тиенĕ 10 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансен отрячĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен виçĕ поездне ÿпĕнтерсе янă. Пĕрремĕш поезд стройка материалĕсем турттарса пынă. Грузсем тиенĕ вагонсем çунса кайнă. Тепĕр поезчĕпе нимĕçсем Германие выльăх-чĕрлĕх турттарса кайнă. Виççĕмĕш поездĕнче 12 пассажирски вагон пулнă, çав вагонсенче летчиксем тата танковăй войскăсен офицерĕсемпе салтакĕсем ларса пынă. Крушени вăхăтĕнче 200 гитлеровеца çити пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 121-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 407-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Карл Р. çапла каласа панă: «Даугавпилс хулинче (Латвире) нимĕçсен çар влаçĕсем темиçе çĕр çынна персе вĕлернĕ. Çынсен темĕн пысăкĕш ушкăнне хуралласа пырса хула тулашне илсе тухнă. Унта вĕсене пысăк канав чавтарнă та хăйсене çав канав умне тăратнă, унтан вара пулеметпа персе вĕлернĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ленинград облаçĕнчи Пологино ялне çаратса, çĕмĕрсе пĕтернĕ. Гитлеровецсем çав ялти 36 мирлĕ çынна, çав шутра 58 çулхи колхознике Антон Димитриевич Димитриева, 53 çулхи Василий Иванович Максимова, 46 çулхи Степан Иванович Гусарова, 40 çулхи Антон Алексеевич Крюкова тата ыттисене те персе е çакса вĕлернĕ.

Уяв парнисем хатĕрлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Телефонпа).** Шурçырма ялсоветĕнчи колхозсем пурте Октябрь уявĕ ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парнесем ярса пама хатĕрленеççĕ.

«Унгастрой» колхоз 28 килограмм какай, 2 килограмм çу, 50 килограмм тулă çăнăхĕ, 2 килограмм пыл, 2 килограмм ыхра, 25 çăмарта ярса пама хатĕрленĕ.

Çавăн пекех Упи ялсоветĕнчи «Янмурзино» колхоз та парнесем туса ямашкăн 75 килограмм тулă çăнăхĕ, 20 килограмм какай, 2 литр эрех, 1 килограмм çу, 2 килограмм пыл, 50 килограмм купăста, 4 килограмм махорка хатĕрлеме тытăннă. «Коминтерн» колхоз 50 килограмм тулă çăнăхĕ, 50 килограмм купăста, 20 килограмм какай, 4 килограмм махорка, 30 çăмарта, 3 килограмм пыл, 1 килограмм çу ярса парать.

Районри ытти колхозсем те совет воинĕсем патне уяв парнисем хатĕрлесе яма йышăннă.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

* * *

СЕНТЕРВĂРРИ, октябрĕн 1-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри колхозсенче октябрь уявĕ ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парнесем ярас ĕç анлăн сарăлать. Паянхи куна районĕпе парнесем туса 198 килограмм какай, 40 килограмм çу, 1,55 тонна тулă çăнăхĕ, 100 килограмм конфет, 200 килограмм премĕк тата 100 килограмм печени хатĕрленĕ. Чылай организацисем хăйсен уйрăмшар посылкисене яма хатĕрленеççĕ. Педагогика институчĕн коллективĕ конфетсемпе премĕксем хунă 4 посылка, райисполкомра ĕçлекенсем 2 посылка, райпромкомбинат коллективĕ 3 посылка яраççĕ.

Нерядовăри колхозниксем 20 килограмм какай, 4 килограмм çу, 40 килограмм тулă çăнăхĕ, Молотов ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем 40 килограмм тулă çăнăхĕ, 20 килограмм какай, 3 килограмм пыл яма хатĕрленеççĕ.

К. РОСТОВЦЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЕТĔРНЕ. **(Телефонпа).** Предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем тата колхозсем Октябрь уявĕ ячĕпе совет воинĕсем патне парнесем яма хатĕрленеççĕ.

Стрелецкри Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 50 килограмм типĕтнĕ какай, 10 килограмм çу, 10 килограмм пыл, 100 литр сĕт, 10 центнер купăста тата çăм чăлхасемпе алшишсем ярса пама йышăннă.

Урапакассинчи «Правда» колхоз 10 килограмм пурă сухари, 50 килограмм [illegible] ярса пама хатĕрленĕ».

И. ЛЬВОВ.

Цех коллективĕ график тăрăх ĕçлет

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Комбинатри Балашов юлташ начальник пулса ертсе пыракан цехăн коллективĕ продукцие çирĕп график тăрăх туса кăларать. Вăл производство планне тултарас тĕлĕшпе графика ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Рабочисем хушшинче нормăна тултарайманнисем çук. Уйрăмăнах станочницăсен ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Фрезеровщица Михайлова тата станочницăсем Волкова, Шапошникова юлташсем сентябрь уйăхĕнче 2—2,5 норма тултарса пычĕç. Вĕсем технологи процесне тĕплĕн вĕренсе çитнĕ.

Юлашки вăхăтра сборщиксемпе клейщиксем хушшинче те ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыракансем чылай. Ку тĕлĕшпе уйрăм рабочисем сентябрь уйăхĕнче паллă ÿсĕмсем турĕç. Сăмахран, двухсотница Сыромолотова юлташ нормăна 250 процент, Сымулова юлташ—240 процент, Ичакова—220 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

—⊙—

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Г. М. Никитин юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

Фронтовой вунăкунлăхăн хăшпĕр итогĕсем

КАНАШ. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Чугунçулсене хĕллене хатĕрлемелли фронтовой вунăкунлăхра Хусан чугунçулĕн 5-мĕш дистанцинче 1.225 çын тата 71 лав ĕçленĕ. Дистанцинчи околодоксенчен малти вырăна пĕрремĕш околодок (çул мастерĕ Т. А. Паладин, бригадирсем Храмкинпа Жарков юлташсем) йышăннă. Паладин мастерăн околодокĕнче вунăкунлăх хушшинче 700 çын ĕçленĕ.

Ĕççыннисене вунăкунлăха хутшăнтарас тĕлĕшпе партин Канаш хула комитечĕ нумай пулăшнă, хăш кун миçе çын ĕçе тухнине тĕрĕслесе тăрса, çынсене чугунçул çинче ĕçлеме явăçтарнă. Çавна пула хуларан вунăкунлăха 600 çынна çити хутшăннă, ку енĕпе Улатăр хулипе ăмăртнă çĕрте Канаш хули мала тухнă. Хулари госбанк урамĕн, «Швейник» артелĕн, станцири тĕп буфетăн коллективĕсем, Канаш районĕнчи колхозсенчен «Мотор» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем уйрăмах лайăх ĕçленĕ. Хулари граждансенчен Вера Платоновăпа Анна Спиридонова («Швейник» артель) Михаил Ефимовпа Константин Пучинский (Госбанк уйрăмĕ), железнодорожниксенчен Елена Чернова, Семен Паничилов, Евдокия Козина, Андрей Жарков, А. Козин, Федоров юлташсем тăрăшса ĕçлесе палăрнă.

5-мĕш дистанцин руководителĕсем фронтовой вунăкунлăхра лайăх ĕçленипе палăрнă 20 çынна наградăсем пама ыйтса Хусан чугунçулĕн Управленине çырса пĕлтернĕ.

Канаш хулин ĕççыннийĕсем фронтовой вунăкунлăхра 1.770 погоннăй метр тăршшĕ чугунçул линине хăпартса юсанă. 310 погоннăй метр тăршшĕнчи рельсăсене улăштарнă, 172 шпал улăштарнă, рельсăсен 500 костыльне çирĕплетнĕ. Линие юсама 220 кубометр шлак турттарса пынă, рельсăсемпе скреплени хатĕрĕсене 36 тонна турттарнă. Лини çинчен ăпăр-тапăрсене 121 кубометр тасатнă.

Çак вунăкунлăха Вăрнар, Куславкка, Шăхасан районĕсем начар хутшăннă.

Енĕшпуç раз'ездĕнче Вăрнар районĕнчен 217 çын ĕçленĕ пулсан, Шăхасан районĕнчен 124 çын, Куславкка районĕнчен 84 çын кăна ĕçленĕ. Çак районсен кашнин вунăкунлăхра куллен 550-шар çын ĕçлеттермелле пулнă. Анчах ку районсенчи организацисен руководителĕсем вунăкунлăха ирттерессине çиелтен пăхнă, ĕççыннисене чугунçул çинче ĕçлеме сахал хутшăнтарнă.

П. НИКОЛАЕВ.

Чугунçул валли—вутă

Квартал планне ирттерсе тултарчĕç

КУКЕÇ. Шупашкар районĕнчен кайнă колхозниксем Йĕпреç леспромхозĕнче чугунçул валли вутă хатĕрлессипе тăрăшса ĕçлеççĕ. Виççĕмĕш кварталта 5.500 кубометр хатĕрлемелле пулнă пулсан, 6.595 кубометр хатĕрлесе плана 119,8 процент, 4.000 кубометр турттарас вырăнне 5.777 кубометр турттарса, плана 144,4 процент тултарнă. Кунта социализмлă ăмăртăва анлăн сарнă. Шупашкар районĕ Октябрьски районпа ăмăртать. Çавăн пекех бригадăпа бригада, рабочипе рабочи ăмăртаççĕ. «Красная Армия» колхоз членĕ Яковлев Максим тата «Красный герой» колхоз членĕ Багреев Петр куллен икĕ кубометр турттарас вырăнне 5—6 кубометр турттараççĕ. «Стрела» колхозри Румянцев Иван, «Чашловар» колхозри Лукин Илья планпа 2,5 кубометр вутă хатĕрлес вырăнне куллен 3,5—4,0 кубометр хатĕрлеççĕ.

Бригадир пулса ĕçлекен коммунист Крыжовников рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организациленĕ. Вăл пĕрмаях рабочисемпе пĕрле. Производствăллă канашлусем туса ĕçĕн лайăх енĕсене, çитменлĕхсене рабочисемпе сÿтсе-явать.

Йĕркеллĕ тухса тăракан «Лесоруб» стена хаçатĕнче стахановла ĕçлекенсен опытне çутатса тăраççĕ, наянланса ĕçлекенсене критикăлаççĕ. Çапла майпа стахановецсен йышĕ кунран кун хутшăнса пырать. Хальхи вăхăтра турттарнă çĕрте ĕçлекенсем 25 çын, хатĕрленĕ çĕрте ĕçлекенсем 12 çын куллен ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Совет Союзĕн Геройĕ Г. Габайдулин юлташ Канашра

КАНАШ, октябрĕн 1-мĕшĕ. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Ĕнер Совет Союзĕн Геройĕ Г. Габайдулин юлташ Канаш хулинче пулчĕ. Вăл унта Н-ски чаçăн пирĕн республикăна килнĕ делегацийĕпе тĕл пулса калаçрĕ. Калаçура Совет Союзĕн Геройĕ Габайдулин, фронтовиксем делегацийĕн членĕсем Эрре, Иванов, Константинов, Раков юлташсем, ВКП(б) Канаш хула комитечĕн секретарĕсем Лисин, Никитин, Данилов юлташсем

Отечественнăй аслă вăрçă фрончěсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Укерчĕк çинче: Зенитнăй оруди командирĕ комсомолец М. Джафаров. Унăн зенитчикĕсем вăрçă пуçланнăранпа фашистсен 17 самолетне персе ӳкернĕ. Джафаров юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Е. КОПЫТА фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Мoздок районĕнчи вăйлă çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Моздок районĕнче виççĕмĕш талăк ĕнтĕ тăшман çарĕсем кунĕн-çĕрĕн хаяррăн атакăлаççĕ. Нимĕçсем темиçе ансăр участоксенче пĕр вăхăтрах танксене йышлăн çапăçăва кĕрте-кĕрте яраççĕ. Пирĕн чаçсем, çирĕп тăрса, тăшманăн атакисене пурне те сире-сире яраççĕ, гитлеровецсене пысăк сиен кӳреççĕ, пуçарулăха противник аллинчен вĕçертсе, вĕсем час-часах хăйсем контратакăсем тăваççĕ.

Совет пехоти тăшманăн танкĕсене вĕсем пирĕн позицисем патне çитиччене çапать. Танксем пирĕн войскăсем тăракан вырăна кĕрсе кайсан, пехота вырăнтах юлать, вăл тăшманăн машинисене çаплах аркатса пырать.

Пĕр участокра нимĕçсем 100 танк хӳтĕлесе пынипе наступлени тума тытăннă. Совет боецĕсем тăшманăн темиçе вуншар машинине çĕмĕрнĕ тата вут тивертсе çунтарнă. Ытти танксем каялла чакнă. Броньăллă машинăсемсĕр тăрса юлсан, фашистсен пехоти çухалса кайнă. Пирĕн командирсемпе боецсем çавăн пек пăтрашса ӳкнипе хăвăрттăн усă курнă та хастарлăн контратака тунă, фашистсене вĕсем малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Гитлеровецсем çапăçу хирĕнче хăйсен вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсене пин çынна çити пăрахса хăварнă.

Танксен çĕнĕ резервĕсене илсе пырса, тăшман ĕнер çĕнĕрен атакăлама тытăнчĕ. Анчах пирĕн артиллери пенипе тата минометсемпе, пехотăн пăшалĕсемпе вăйлăн персе, нимĕç пехотине танксенчен уйăрма май килнĕ. Совет воинĕсем фашистсен пехотинецĕсене уйăраммăн-уйăраммăн пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăтрах пирĕн летчик-штурмовиксем хăйсен мĕнпур вăйĕпе нимĕçсен танкĕсене тапăннă. Темиçе хутчен вĕççе пырса, вĕсем фашистсен нумай машинине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн бронебойщиксемпе артиллеристсем тăшманăн машинисене сахал мар вут тивертсе çунтарнă тата персе çĕмĕрнĕ.

Совет чаçĕсем тăшманăн атакисене сирсе яраççĕ, хăйсем йышăннă рубежсене хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Г. ОШАРОВСКИЙ.

Земляксен çырăвĕсем

Фрицсене пĕтерсе пыратпăр

Граната

Хĕрӳллĕ çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн красноармеецсем противникăн танкĕсемпе арăслан пек паттăррăн çапăçнă. Красноармеец Комаршин çак самантра малти позицире хăйĕн пурнăçне хĕрхенмесĕр фашистсен салтакĕсене пĕрин хыççăн теприне пере-пере ӳкернĕ. Кĕтмен самантра тĕмеллĕ вырăнтан грузовик курăннă. Ун çинче 15 нимĕç автоматчикĕ ларса пынă. Машина пирĕн малти окопсем патне сывхарнă та чарăннă.

— Русс, сдавайсь!—тесе кăшкăрнă фашистсем. Çакăн хыççăн вĕсем пирĕн боецсен çăра ушкăнĕ ăшне ручной граната ывăтнă. Граната шăхăрса, красноармеец Комаршин урисем патне пырса ӳкнĕ. Нумай шутласа тăмасăр, боец гранатăна алла илнĕ те нимĕçсем патне каялла вăркăнтарнă, граната тĕл лекнĕ. Граната çурăлнă, хăйсен гранати çурăлнипе 15 фриц машина çинчех вилĕм тупнă.

Засадăра

Красноармеец Петухова командовани засадăна кайма задани панă. Хăюллă боец самантрах палăртнă вырăна çитнĕ. Лăпкăн та шавсăр Дон шывĕ юхса выртнă, инçетрен кăвак шуçăм сутăлса килнĕ. Кăштах çил тухса Дона хумхатма пуçланă. Дон хĕрринче, симĕс хăмăшсем ăшĕнче Петухов ларнă. Çыранăн тепĕр енчен кимĕпе фашистсен 6 салтакĕ ку еннелле шăваннă. Каçса çитсен 15 метра яхăн çеç юлнă. Çак самантра красноармеец Петухов фашистсем ларнă кимĕ çине 3—4 черет пенĕ. Бандитсем шыва сикме те, кимĕ тĕпне выртма та ĕлкĕреймен, 6-шĕ те хăюллă красноармеец персе янă пульăсенчен вилĕм тупнă. Бандитсен виллисемпе тулнă кимĕ Дон тăрăх аналталла юхнă. Красноармеец Петухов задание пурнăçлани çинчен пĕлтернĕ.

Г. МЫТИКОВ.

СТАЛИНГРАД ФРОНЧĔ

Малта пыракан колхозра

Колхоз председателĕ Ежов юлташ канцелярине тĕттĕм пулсан çеç таврăнчĕ. Паян вăл кунĕпех колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулчĕ: сĕт-çу ферминче выльăх апатне мĕнле расходланипе паллашрĕ, уя тухса, кĕрхи çĕртме тăвакансен ĕç пахалăхпе тĕрĕслерĕ.

— Аптрамалла вăл çынсемпе, ывăнма та пĕлмеççĕ,—терĕ вăл канцелярийинче ларакан хăй пекех ватă счетоводне Слепов юлташа, пĕр хут татăкĕ тыттарса.—Пăх-ха, мĕн тăваççĕ вĕсем. Паян пилĕк лашапа сакăр лаша сухаламалли çĕре сухаланă. Ĕç пахалăхĕ те лайăх, пур çĕрте те 18 сантиметртан ăшăх мар сухаланă.

Колхоз счетоводне ку сăмахсем хытах савăнтарчĕç пулас. Вăл çырма пăрахсах колхоз председателĕпе калаçма тытăнчĕ.

— Да, лайăх ĕçлеççĕ. Акă, пăх, тырă вырнă чухне вĕсем миçешер ĕçкунĕ илсе пынă, 3—4 ачаллă хĕрарăмсем те нормăсене ирттерсе тултарса ĕçленĕ.

Унтан счетоводпа председатель колхозниксем ку таранччен миçешер ĕçкунĕ тунине тĕрĕслеме тытăнчĕç. Журнал çинче пурте пур, ăна пăхсан колхоз ĕçне кам активлăрах хутшăнни уççăнах курăнать.

Клочкова Александра кăçал пĕччен 167 ĕçкунĕ тунă. Вăл шутран август уйăхĕнче 44 ĕçкунĕ тунă. Бойкова Екатеринăн та çавăн чухлех. Слепова Александра вара тата вăйлăрах ĕçленĕ, унăн 246 ĕçкунĕ, августра вăл 46 ĕçкунĕ тунă.

Списока кĕртнĕ çынсенчен 160 ĕçкунĕнчен кая тунисем пĕрре те çук. Урăхла каласан, ĕçкунĕсен минимумне колхозра пурте ытлашшипех тултарнă.

— Вăл ахальтен мар ĕнтĕ. Астăватăн пулĕ, иртнĕ çулта, вăрçă пуçлансан, колхозниксем кашниех икшер çыншăн ĕçлеме сăмах панăччĕ. Шутла-ха, миçе çын фронта кайрĕç, анчах ĕç пĕртте уксахламасть вĕт,—асăрхаттарчĕ счетовод, журнала пăхса тухнă хыççăн.

Тĕрĕс. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал ялхуçалăх ĕçне нихăçанхи пек мар организованно туса пырать. Вăл районра уйри пур йышши культурăсене те пуринчен малтан вырса, çапса пĕтерчĕ. Халь, акă, итемсем çинче çапман кĕлте тупма çук: пăрçине те, ясмăкне те, йĕтĕн-кантăрне те вĕçех çапса тирпейленĕ, государствăна тырă парса татнă. Çĕрулмине сентябрĕн 10-мĕшĕнче, ытти йышши пахча-çимĕçсене сентябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне кăларса пĕтерчĕç.

Анчах ĕç вĕçленмен-ха. Çĕршыв колхозниксене татах та тимлĕрех ĕçлеме, фронта пулăшассине вăйлатса пыма хушать. Ăна кашни колхозник тĕплĕн пĕлсе тăрать. Халь уйрăмах çанталăк лайăх тăнă вăхăтра колхозниксем мĕнпур вăя хурса ĕçлеме тăрăшаççĕ. Вĕсенчен пĕр пайĕ вăрман хатĕрлес ĕçе пуçăнчĕ. Çулте асăннă Клочкова, Бойкова, Слепова тата Медведевăпа Оборина юлташсем авăн çапса пĕтернĕ хыççăнах вăрман хатĕрлеме кайнă. Çак кунсенче вĕсенчен лайăх хыпар килчĕ: вĕсем кашниех нормăсене ирттерсе тултараççĕ. Колхозниксенчен теприсем тата кĕрхи çĕртме тăваççĕ, йĕтĕн сарса сӳс тăваççĕ.

Колхозниксем çĕрле пулсан тин ĕçрен таврăнаççĕ. Кунĕпе ĕçленĕ хыççăн ывăннă темелле вĕсене. Анчах вăл курăнмасть. Хĕрсем пĕр вăхăт хушши вылямa тухаççĕ, ватăраххисем пулниилтни çинчен сӳтсе-явма çуртсем умне тухса лараççĕ, теприсем колхоз канцелярине пыраççĕ. Кунта тепĕр чухне правлени председателĕ Ежов юлташ кĕске калаçу та туса ирттерет, умри ĕçсем çинчен каласа парать.

— Октябрьти социализмлă революци 25 çул тултаракан чаплă кун çывăхарса килет. Унччен пирĕн пур ĕççене те туса пĕтермелле. Пирĕн ĕç те фронта пулăшать,—тет вара вăл час-часах.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕ. Вăл чаплă куна ялхуçалăх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳ тунипе, государство умĕнчи парăмсене пурне те парса татнипе кĕтсе илет.

Х. ЛИСИН.

ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔ.

Йĕркесĕрлĕхе пула тырă çĕрет

КУСЛАВККА, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Минкĕшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхозра тырра йĕркесĕр нумай тăккалаççĕ. Çĕмелсен вырăнĕсенче пĕрер сантиметр хулăмĕш пучах выртса юлать пулсан та, ăна пуçтарса пымаççĕ. Капансем патĕнче вĕсене тунă чухне тăкăнса юлнă тырра халĕ те пуçтарса илмен, нумай кун хушши ĕнтĕ вăл çумăр айĕнче йĕпенсе выртать, шăтса пăсăлать.

Колхоз председателĕ Горчихин тата бригадирсем итем çинче кашни кунах пулаççĕ пулсан та, унти йĕркесĕрлĕхе курмасăр иртсе çӳреççĕ. Вĕсен тимсĕрлĕхне, ĕçри ответсăрлăхне пула, авăн çапас ĕç колхозра тӳсме çук япăх пулса пырать. Уçă итем çинче те, капансем тавраш ĕнчи пекех, çумăр айĕнче тырă йĕпенсе выртать, пăсăлать.

Пĕрремĕш бригадăра тăватă кун каярах çапнă ыраша паян кун та амбарсене пуçтарса кĕртмен. Тырă кăшăлне улăмпа çеç витсе хунă, виçĕ кун хушши çумăр айĕнче исленсе тăнăскер, вăл пĕтĕмĕшпех пăсăлнă. Итем çинче пуçтарман тырă кăшăлĕ выртни çинчен бригадир Сидорова пачах манса кайнă. Çавăн пекех, виççĕмĕш бригадăра та виçĕ кун каярах çапнă пăрçа паян кун та итем çинчех тӳсе выртать. Çапнă пăрçана арпинчен те уйăрман, çапла темиçе центнер пăрçа пĕтĕмĕшпех шăтса кăвакарса кайнă.

Çакăн пек киревсĕр фактсем колхозниксене чĕререн хумхантараççĕ. Вĕсем итем çинче йĕркелĕх тумалли çинчен колхоз председательне пĕрре кăна мар асăрхаттарнă. Анчах колхоз председателĕ, унпа пĕрле хăшпĕр бригадирсем те, колхоз тыррине сыхлас ĕçре ответлăха туйса ĕçлемеççĕ.

«Майăн 1-мĕшĕ» колхозăн авăн çапас, тырпула амбарсене кĕртес ĕçре халех большевикла йĕркелĕх тумалла, колхоз тыррине çĕртекенсене çирĕп ответ тыттармалла.

И. Ш.

Çĕрулмине уя нумай хăвараççĕ

ВĂРМАР. Аслă Чакă ялсоветне кĕрекен Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра çĕрулми кăларас ĕç кирлĕ пек лайăх пулса пымасть. Çĕрулми çĕре нумай юлать, турттарнă чухне те нумай тăккаланать. Çапла пулсан та колхоз педседателĕ Морозов юлташ ĕçĕн пахалăхне лайăхлатассишĕн нимĕнле мера та йышăнмасть.

Колхозник В. АНДРИЯНОВ.

Вĕренекенсем хĕрӳ ĕçре

ВĂРНАР. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн «Колхозсемпе совхозсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртесси çинчен» йышăннă постановленине районри шкул ачисем хĕрӳ ĕçпе ответлеççĕ. Кӳстӳмерти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем шкул директорĕ Ф. Архипова ертсе пынипе Крупская ячĕпе хисепленекен колхоза пахча-çимĕçсене пухса кĕртме, çĕрулми кăларма пулăшрĕç.

Пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине вăхăтра пухса кĕртсе лайăх сыхласа усрани, чи малтанхи тупăша государствăна пани—вăл фронта пулăшниех пулнине вĕренекенсем лайăх ăнланаççĕ. Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнче вĕренекен Зоя Якимова звени кăçал пахча-çимĕç ĕçĕнче 168,63 ĕçкунĕ тунă, тырă вырнипе ытти ĕççене шутласан, звено пурĕ сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 973,37 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ. Махорка ӳстерсе пухса кĕртес енĕпе ĕçлекен В. Алексеев звени (звенора пурĕ 4 вĕренекен) кăçал 156 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ.

Пахча-çимĕçсене пухса кĕртнипех ĕç вĕçленмест-ха, вĕсене тата лайăх сыхласа усрамалла. Çак ĕçре те вĕренекен ачасен кăçал тимлĕн ĕçлеме тивет. Пахча-çимĕçпе çĕрулмине тата вăрлăхлăх хăварнă пахча-çимĕçсене хĕллехи вăхăтра пăхса усрас тĕлĕшпе те пионерсемпе шкул ачисем хатĕр тăмалла. Вĕренекенсем пулăшнипе районри нумай шкулсенче подвалсем, хранилищĕсем тунă, çимĕçсене хĕл каçарма лайăх типтерлесе хунă. Упнер, Хапăс, Кĕçĕн Кипек, Кӳстӳмер шкулĕсенчи вĕренекенсем подвалсем чавнă çĕрте организованно ĕçленĕ. Колхозсене тухăçлă çĕрулмине лайăх пуçтарса кĕртме шкулсем пысăк пулăшу параççĕ. Кĕçĕн Кипекри вăтам шкул «Память Ленина» колхоза 800 пăт кĕмелĕх çĕрулми подвалĕ хатĕрлесе панă.

Упнерти туллимар вăтам шкулăн пуçламĕш класĕсенче вĕренекенсем халĕ те уроксем хыççăн кулленех колхоза ĕçлеме тухаççĕ. Вĕренекенсем пулăшнипе кунта çĕрулмине тăватă гектара яхăн кăларнă.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Партизанка Валя

Çирĕм çулхи партизанкăн историйĕ пысăк мар. Вальăн амăшĕ колхозница, унăн ашшĕ пирĕн çĕршыв умне пысăк кăмăллăх килсе тухсан, фронта кайнă. Вăрçă пуçланиччен Валя районри сутĕç пайĕнче инспектор пулса ĕçленĕ. Вĕсен районне нимĕçсем килсе кĕрсен, вăл партизансем патне кайнă. Валя ăçта кайнине унăн тăван ялĕнче амăшĕсĕр пуçне урăх никам та пĕлмен.

Çав район центрĕнче нимĕçсен гарнизонĕ вырнаçнине пĕлсен, партизансем Вальăна çав яла разведкăна янă, мĕншĕн тесен Валя çав район центрĕнчи кашни кĕтесе, кашни çурта питĕ лайăх пĕлнĕ.

Район центрне кайиччен малтан Валя хăйсен ялне кĕрсе амăшĕпе калаçма, унта лару-тăру мĕнлине пĕлме шутланă. Каçхине 10 сехет тĕлнелле вăл хăйĕн тăван килĕ патнелле пынă. Амăшĕ кăмака умĕнче темĕскер ĕçленĕ. Пӳрт алăкĕ уçăлсан, вăл каялла çаврăнса:

— Кам унта? — тесе ыйтнă.

— Эпĕ, анне...—тенĕ Валя.

— Валя! — тесе кăшкăрса янă савăнса амăшĕ. Вăл хăйĕн аллинчи ухватне пăрахса, Вальăна ыталаса тытнă, чуптунă. Вĕсем пĕр-пĕрне пилĕк уйăх ытла курман.

— Валя, Валя, тенĕ хуллен амăшĕ, эпĕ сана вĕлернĕ пулĕ тесе шутланă. Сана никам та курман-и?

— Çук, никам та курман.

— Ку питĕ аван, питĕ лайăх.

Нимĕçсем Валя амăшĕ патне пĕрре кăна пыман, унăн хĕрĕ ăçтине пĕлме тăрăшнă. Вăл хăйĕн хĕрĕ ăçтине пĕлместĕп тесе ответленĕ. Анчах та ку ответ нимĕçсене çырлахтарман. Вĕсем Валя партизансем патне кайнине туйнă, унăн амăшне: «Хăвăн хĕрӳ килсене шире пĕлтермесен, сирĕн çурта чĕртсе çунтаратпăр», тесе пĕлтернĕ.

Амăшĕ сĕтел тавра кускаланă. Сĕтел çине вĕретнĕ сĕт тултарнă чăм кăларса лартнă. Валя яланах юратнă икерчĕне хунă. Валя апат çиме ларнă. Амăшĕн куççулĕ каллех юхса аннă. Вăл нимĕн те чĕнмен. Валя амăшне çине тăрса калаçтарнă.

— Эпĕ лексен, нимĕçсем сана çунтарса яраççĕ вĕт, анне.

— Çунтарса яраççĕ, эпĕ ăна пĕлетĕп.

— Кала, мĕнле вара пурăнмалла?

Амăшĕ каллех нимĕн те чĕнмен.

— Çунтарса ярĕçин, — тесе сăмах хушнă амăшĕ.

Тепĕр кунне Валя пахчасем витĕр район центрне кайнă. Тăван хулари паллă çуртсенчен пĕри. Акă хулан асла урамĕ, ăна нимĕçсем йăлтах çĕмĕрсе тăкнă. Валя сылтăмалла çаврăннă унта юханшыв. Кунта районри Колхоз çурчĕ. Çак çуртра — нимĕçсен гарнизонĕ.

Килкарти тавра йĕплĕ пралук карса тухнă. Хĕрача чердак çине, çурт тăрне вырнаçтарнă пулемет кĕпçисене тĕплĕн сăнаса тухнă. Килкартинче машина тăнă. Нимĕç салтакĕсем патрон ещĕкĕсене шутланă. Нимĕçсем çав ещĕксене хăш сарайне илсе кĕнине сăнанă, постсем ăçта тăнине те тĕплĕн пăхса тухнă. Партизансем çĕрле килсе тапăнас пулсан, ăçтан пымаллине сăнасси кăна юлнă. Валя юханшыв çине аннă та, çырма тупнă, çав çырма тӳрех нимĕçсен гарнизонĕ вырнаçнă çурта илсе пынă. Кун хыççăн вăл электростанци патне кайнă. Нимĕç часовойĕсем ăçта тănине, станци çуртне ăçтан лайăхрах пырса тĕме май килнине палăртнă.

Каç пулать. Васкамалла. Каç пулсан нимĕçсем ялта никама та çӳретмеççĕ. Икĕ-виçĕ урам урлă каçсан, Валя хула хĕррине тухнă. Кĕпер урлă каçмалли кăна юлнă, унтан вара чăрăш вăрманĕ курăнать.

Валя юханшыв патне çитсен каç пулнă, çыран хĕррипе нимĕç часовойĕ утса çӳренĕ. Хастарлă хĕрача, трофейнăй браунинга пĕчĕк сумкăран кăларнă та, нимĕç часовойĕ аякалла пăрăнсан харслаттарса пенĕ. Нимĕç часовойĕ:—Хальт! — тесе кăшкăрнă. Çак вăхăтра Валя кĕпер варне çитнĕ те, нимĕç часовойĕ еннелле каллех пенĕ. Часовой кукленсе ларнă. Çак вăхăтра усă курса, хĕрача кĕпер çинчен чупса каçнă, йывăç тĕмисем патне чупса çитсе выртнă. Часовой нимĕн йĕркесĕр пенĕ. Хурал чупса пынă, автоматсенчен пеме тытăннă. Валя хырăмпа шуса лапам вырăна çитнĕ. Вăл вăрманта çĕр каçнă. Тепĕр кунне партизансен отрячĕн командирне приказа пурнăçа кĕртни çинчен рапорт панă. Тепĕр каçхине нимĕç гарнизонĕ, боеприпассен склачĕ сывлăша сирпĕннĕ. Партизансем ăна аркатса тăкнă. Халĕ çак хулара пирĕн воинсем.

Старши политрук Р. ШАШКОВ.



АНГЛИН СЫВЛĂШ-ÇАР ФЛОЧĔ. Укерчĕк çинче: «Стирлинг» йышши пысăк бомбардировщик экипажĕ боевой операцие вĕçсе каяс умĕн.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: кĕске вăхăт хушши чарăнса тăнă хыççăн сентябрĕн 29-мĕшĕнче общинăсен палатин ларăвĕ пулнă.

Премьер-министр Черчилль Мадагаскарăн кăнтăр пайĕнчи юлашки порт Тулеар парăнни çинчен пĕлтернĕ. Англи войскисем Мадагаскар утравĕ çинче тунă операцисем çинчен тата çав утравăн столицине— Тананаривене йышăнса илни çинчен каласа, Черчилль çапла пĕлтернĕ: халĕ Виши правительствин юлнă войскисене столицăран кăнтăралла хăваласа пыраççĕ. Утравăн çурçĕр пайĕнче Мажунгăпа Диего—Суарес хушшинче противник хирĕç тăнине çĕнтернĕ, халĕ çав районра лăпкă пулса тăнă.

Французсем питĕ начар хирĕç тăнă тени тĕрĕс-и вăл? тесе ыйтсан, Черчилль çапла каланă: «Вĕсем хирĕç тăни вăл йăлишĕн кăна пулнă тесе шутлатăп эпĕ», тенĕ.

Черчилль иккĕмĕш фронт уçас тĕлĕшпе тĕрлĕ шухăшсем калама кирлĕ марри çинчен каланă. Ăна çав ыйту тĕлĕшпе каласа пама ыйтсан, Черчилль çапла каланă: «Эпĕ май килнипе усă курса, çакна палăртса паратăп: союзниксен наступлениллĕ операцийĕсем хăçан тата хăш пунктра пуласси çинчен пухусенче тухса калама е уйрăм шухăшсем каласа пама кирлĕ мар, çав заявленисемпе шухăшсене уйрăм çынсем пĕлтернĕ тăрăх (манран халь ыйтни те çавăн пекскер пулмалла) каласа панă пулсан та, ун пек тума кирлĕ мар», тенĕ.

Общинăсен палатинче—мĕншĕн Рим çине сывлăшран бомбăсем пăрахмаççĕ? тесе ыйтсан, Черчилль çав ыйту тăрăх ĕлĕкрех калани çумне мĕн те пулсан хушса калама килĕшмен. Ĕлĕкрех вăл: Каир çине бомбăсем пăрахсан—Рим çине те бомбăсем пăрахатпăр, тесе каланă. Кирек мĕн пулсан та, тенĕ Черчилль, Англи авиацийĕ Итали территорийĕнчи çар объекчĕсем çине 104 хутчен бомбăсем пăрахнă. Кунсăр пуçне, темиçе хутчен тинĕс енчен пенĕ, пĕлтĕр Генуйăна тупăсемпе пени те çак шута кĕрет.

Лаваль хаяррăн тата сутăнчăкла хăтланнă пирки Англия Виши правительстви тĕлĕшпе мĕнле позици йышăнасси çинчен общинăсен палатинче каласа пама ыйтсан, Черчилль çапла каланă: «Эпĕ урăх нимĕн те калама пултараймастăп», тенĕ. Лавале хытă сивлемелле, тесе çине тăрса ыйтнине хирĕç Черчилль çапла ответ панă: «Англичан чĕлхин словарĕнчи пур запассемпе те усă куртăм пуль ĕнтĕ эпĕ», тенĕ.

Германире рабочисем питĕ нумай çитмеççĕ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Кельнише цейтунг» ятлă гитлерла хаçат Германире рабочисем çитменни çивĕчленсе пынă пирки хăраса çырать. «Çур çул каялла,—тесе çырать хаçат,—предприятисен руководителĕсенчен нумайĕшĕ—Германин çар промышленноçĕ умне лартакан требованисене пурнăçа кĕртме май çук, тесе калатчĕç. Çуркунне çăра нумай çынна илнĕ пирки лару-тăру чăнах та нумай енчен йывăрланса кайрĕ. Промышленноçра рабочисем çитменнине ют çĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисемпе тултарнă тесе шухăшлама юрамасть».

Ют çĕршывсенчен нимĕç предприятийĕсенче ĕçлеме ирĕксĕр мобилизациленсе илсе килнĕ рабочисем ытларах та ытларах ӳпкелешнĕ пирки хаçат хăраса ӳкнĕ. Германире ют çĕршывсенчен килнĕ рабочисем валли каторгăри пек режим туса хунă пирки, çав рабочисем ӳпкелешни тата ытларах вăйланса пырать, çакна гитлерла хаçатăн та йышăнма тивет. «Германире иностранецсем тӳсекен йывăрлăхсене нимĕç оргăнĕсем пĕлеççĕ,—тесе çырать «Кельнише цейтунг».—Вăрçă пуçланни тăваттăмĕш çул ĕнтĕ, çавăнпа иностранецсен бараксенче пурăнма тата начартарах апатпа (урăхла каласан— выçăпа) кăнăçма тивет. Миллионшар иностранец енчен тухса тăракан хăрушлăха Германире никам та пытарса тăмасть».

ИТАЛИРЕ НУМАЙ ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ ХУПАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çитес уйăхсенче Италин авăрлакан тата тĕртекен пур фабрикисене те хупаççĕ. Мĕнпурĕ 900 предприятие хупаççĕ, çав предприятисенче халĕ 170 пин рабочи ĕçлесе тăрать. Итали правительствин агентстви Стефани каланă тăрăх, ĕççĕр тăрса юлнисене «вĕсем ăçта кирлĕ—çавăнта», урăхла каласан—чи малтан Германие кайса, ĕçе кĕме ирĕк параççĕ.

ИТАЛИ ВОЙСКИСЕМ СЛОВЕНИРЕ ТĂВАКАН ИРСĔР ĔÇСЕНЕ ХИРĔÇ ИТАЛИРИ ЕПИСКОПСЕМ ПРОТЕСТЛЕÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çакăн пек пĕлтерӳ илнĕ: Италири виçĕ епископ—Триест, Гориция тата Фиуме хулисенчи епископсем Муссолини патне çыру янă, çырура вĕсем Итали войскисемпе чернорубашечниксем оккупациленĕ Словенире вĕлерсе, алхасса çӳренине хирĕç вăйлăн протестлеççĕ. Епископсем Италин оккупациллĕ войскисене вĕсем пĕтĕм ялсене çунтараççĕ, хӳтлĕхсĕр ачасене пере-пере вĕлереççĕ, заложниксене тăтăшах асаплантара-асаплантара вĕлереççĕ, тесе айăплаççĕ.

Словенире фашистла террор çаплах хаярланса пырать. Юлашкинчен илнĕ пĕлтерӳсем тăрăх, словен заложникĕсене 2 пин çынна яхăн персе вĕлернĕ.

ГЕРМАНИРЕ ВĂТАМ ЕМĔРХИ ПЕК АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРЕÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франкфуртри суд нумаях пулмасть 7 нимĕç гражданне вĕлермелле туса приговор йышăннă, вĕсене «государствăна сутнă тесе тата Германи халăхĕн хирĕç тăрас хăватне хавшатма хăтланнă тесе» айăпланă. Приговор йышăнсан тепĕр кунхех çав 7 çынна пуç касмалли вырăна илсе пынă та вĕсен пуçĕсене касса татнă.

Турци сучĕ Павловпа Корнилов панă кассациллĕ жалобăсене вĕсене чĕнмесĕрех пăхса тухма йышăннă

АНКАРА, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Папен çине тапăннă тесе айăпланă совет гражданĕсем Павловпа Корнилов вĕсем тĕлĕшпе Анкарари суд йышăннă приговор пирки кассациллĕ жалобăсем панăччĕ, çав жалобăсенче Павловпа Корнилов вĕсене тĕрĕс мар суд тунине тата тепĕр хут кăтартса панă, хăйсем айăплă марри çинчен çырса, вĕсем çав приговора пăрахăçлама ыйтнă.

Жалобăсенче Павловпа Корнилов, судра хăйсене хăйсем хӳтĕленĕскерсем, кассацисене пăхакан суда хăйсене чĕнме ыйтнă. Вĕсем хăйсем айăпсăррине суд умĕнче каласа парас тата хăйсем айăплă маррине çирĕплетсе кăтартас тесе шутланă.

Суд йĕрки тăрăх Павловпа Корнилов ыйтнисене ӳкĕте илсе, вĕсене суд тунă çĕре чĕнме май пулнă пулсан та, Анкарари кассацисене пăхакан главнăй суд Павловпа Корниловăн жалобисене вĕсене хăйсене суда чĕнмесĕрех пăхса тухма йышăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СУНДЫРСКАЯ МЕЖРАЙОННАЯ КОЛХОЗНАЯ ШКОЛА НАРКОМЗЕМА ЧУВ. АССР

объявляет прием на курсы ветфельдшеров, бригадиров-животноводов, полеводов и счетоводов на 1942—43 учеб. год. На ветфельдшерском отделении срок обучения 10 месяцев, а на отделениях бригадиров-полеводов и животноводов срок обучения 5 месяцев. Лица с 7-ми летним образованием принимаются на курсы без испытаний.

Прием заявлений до 10 октября 1942 г. К заявлению прилагаются следующие документы: 1) командировка от райзо или от колхоза; 2) свидетельство о рождении; 3) свидетельство об образовании; 4) справка о состоянии здоровья.

Обучение бесплатное.

Начало занятий на всех отделениях 5 октября. Принимаются из районов: Аликовского, Красночетайского, Ядринского, Советского, Сундырского, Ишлейского, Чебоксарского, Мариносадского и Калининского.

Заявления и запросы направлять по адресу: Сундырский район, Шемиковский с/с., дер. Кади-кассы, МРКШ.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 044 Типография № 1 Управления полиграф[illegible] ЧАССР, [illegible] Заказ № 2. Ф б 53 24 п. н.